(чув)
Г-68
21560 чув

ДЕНИС ГОРДЕЕВ

ХУРĂНСАР

Национальная библиотека ЧР
4-021560

ЬНЫЙ ЛИСТОК
В ВОЗВРАТА

ДОЛЖНА БЫТЬ
ЕНА НЕ ПОЗЖЕ
ГО ЗДЕСЬ СРОКА

Колич. пред. выдач _____

М 21560 нуб.

Кф
К С(Чу
Г68

ДЕНИС
ГОРДЕЕВ

ХУРĂНСАР

САВĂСЕМ

Кр

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1978

С(ЧУВ)
Г 68

м 21560 -44в

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

ПРОВЕРЕНО
2010

Г 0763—010 / М 136(03)—78 79—78

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1978 ç.

ТĂВАН ХАЛĂХ СĂНĔ

1

Çуллахи каç ытла кĕске,
Йртет вăл ырă тĕлĕк пек.
Çил, алхасма вĕреннĕскер,
Ирех вылять, ав, чечекпе.

Атте калать:
— Чăн пархатар
Ĕçре кăна вăл тупăнать.
Ĕçпе, ачам, вăйăпа мар,
Пур ырлăх-пурлăх пухăнать.

Анне калать:
— Уç сывлăмпа
Çăвăнакан вăй-халлă,— тет.
...Çулатăп утă сулăмпа —
Паккус йĕркипелех ӳсет.

Маттур ялйыш, тус-йыш маттур,
Вăй-хал та иксĕлми тулли.
Пирте Чапаев сăнĕ пур,
Пирте пур Андриян кулли.

2

Сиксе тухать кабинăран:
— Ут шăварар та кăшт канар.

Уй-хир вăраннă ыйхăран,—
Уç сывлăшпа пите çăвар.

Куратăп: çул çинче черет,
Хурçă утсем, ав, речĕпех.
Çĕр хăйĕн ырлăхне кӳрет
Хĕрӳллĕ ĕç тивлечĕпе.

Хресчен акать, хресчен васкать,
Çĕре шанса пиллет ĕçне...
Хĕвел çути хире лăпкать:
Сăн тулăх пултăр кĕркунне!

Телейлĕ, халăх, сан шăпу.
Çĕршыв пӳлми те тăп-тулли.
...Пирте Чапаев сăнĕ пур,
Пирте пур Андриян кулли.

3

Кĕрле, мотор! Кĕрле, кĕрле!
Хирти илем санран килет.
Комбайн пусăра тĕрлет,
Тулсах, тулсах пырать кĕлет.

Хĕве ман хылчăк тăрăнать.
Ӳпкелешместĕп.
Бункертан
Сар тулă, ав, тапса тăрать,
Чăн çутă ылтăнпа пĕр тан.

Илетĕп эп ывăçăмпа
Шултра сар тулă тĕшшине.
Туятăп пĕтĕм чунăмпа
Çӳлти хĕвелĕн ăшшине.

Ёçчен çынран çĕр тӳсмĕ хур,
Нихçан ĕшенмĕ ĕç алли.
Пирте Чапаев сăнĕ пур,
Пирте пур Андриян кулли.

4

Уяв-тăк — пĕтĕм халăхпа,
Уяв хитре — йышпа пĕрле.
Тĕнче илтмелĕх сасăпа,
Хаваслă ĕç юрри, кĕрле!

Чĕнетпĕр пĕлĕш-тăвана
Кĕрхи тулли кĕрекене.
Чĕнетпĕр ырăпа кăна
Чăн ырăпа ĕçлекене.

Тăван çĕре пин хут мухтав!
Пурлăх хушма пехил ăна.
Янрат, ялйыш, атя юхтар
Ёçре ĕнернĕ юрруна!

Совет çынни чăн-чăн маттур,
Ёçчен, ăста хресчен алли.
Пирте Чапаев сăнĕ пур,
Пирте пур Андриян кулли.

АСАП МĔЛКИ

Çул хĕррине хунанă талпиçен,
Çӳçне-пуçне тусăнтарать çилпе.
Тулли пучах йĕппи çинче çиçет
Ăрша, хĕвел вăратнă кӳлĕ пек.

Утас килет тăван хир тăрăх ман,
Выртассăмах килет, ытам сарса.
«Çак сăрт çамки мĕн чухлĕ тар
çăтман...» —
Шутлатăп, пиншака йӳле ярса.

Мĕн чухлĕ тар... Куççуль... Тăварлăскер...
Халь иртнĕ ĕнтĕ сумсăр самана.
Сар тулă хумĕ, сийлĕ-сийлĕскер,
Чупса килсе савăнтарать мана.

Сар сăрăпа сăрлать пучахсене
Хĕвел шевли, куça шартса çиçет...
Асап мĕлки пулса, çул хĕррине
Хăюсăр, сумсăр шăтнă талпиçен.

Йăрăмланса, сурпан тĕррийĕ пек,
Кĕрен тĕс витнĕ тухăçа.
Сĕт тĕслĕ пĕлĕт хырлăх тăррипе
Ӳркевлĕн йăтăнса куçать.

Пĕртен-пĕр çăлтăр тĕлкĕшсе çунать,
Йăлтăртатса çунмашкăн хăяймасть...
Çак ирĕн илемне курман çынна,
Паллах, тĕнче хитре пек курăнмасть.

Пуçламăш хут алла илсессĕн
Сап-сар кăтраллă кĕлтене,
Хăвăн ĕçне хаклатăн эсĕ
Шитпе виçсе пучахсене.

Ытамунтан яма пĕлместĕн
Пӳ çӳллĕш ӳснĕ ыраша...
Çĕр пархатарĕ вăй кӳмест-им
Ĕçпе туслашнă чăваша?

ҪАМРĂКЛĂХ

Уҫă кантăкра ташлатăр
Ҫумăр, сăвă каласа,
Хурлăхан тĕмĕ кашлатăр,
Сив хĕле манса кайса.

Юрă пулăп та эп ҫӳрĕп
Ҫил ҫинче ҫĕршыв тавра.
Юрăпа хаваслăх кӳрĕп
Уй-хирте те стройкăра.

Халсăрланмĕ яш ҫунатăм:
Вăй парать ҫĕршыв-анне.
Эп куратăп, эп юрлатăп
Мухтаса ҫĕр илемне.

ÇУЛ ТУСĔ

Санпа эп пĕр йĕрпех утатăп.
Çул пылчăклă, тумхах кăна.
Ӳкме пуçларăм — алă патăн,
Пиллерĕн шанчăк. Тав сана!

Çулран тухса кайма тăрсассăн,
Утма хистерĕн юнашар.
Çумри тус шанчăклă пулсассăн,
Нимле асап та хăруш мар.

АННЕНЕ

1

Сывлăхна пĕлес килет, аннеçĕм —
Ватă ĕнтĕ эсĕ, çитмĕлте.
Чун-чĕре киле çитме хистет-çке,
Пулăп, тен, паян-ыран килте.

Пахчари чие халь çап-çарах-ши,
Çил сирмен-ши пас йĕпписене?..
Ун айнех эп юр çине ларасшăн
Таврăнсассăн, ывăннă енне.

Чĕререн вара эп аса илĕп
Ача чухнехи самантсене...
Çупăрлам сана, юратнă килĕм,
Çупăрлам сана, аннем, анне.

2

Чӳрече умне çерçи ларсассăн,
Кĕт, аннеçĕм, эпĕ килессе.
Алăка яри уçса ярсассăн,
Иккĕленмĕн кам-ши ку тесе.

Хур сĕтел çине хуплу, шăрттан та,
Çулçӳревçĕ ывăлна ятлах.
Пуç чиксе сана хуллен калатăп:
— Ял çерçийĕ туртăнать ялах.

3

— Хуп сăпка-и? Астăвап, аннеçĕм.
Çĕмĕртренччĕ пĕкечийĕ ун...
Ĕмĕрĕ сăпкан виçесĕр, теççĕ.
Чăланрах упратни паян кун?

— Упранать-çке. Йăлисем çапла çав.
Сăпкаран эс тартăн хулана...
Сăпкара халь юрласа ир-каçăн
Сиктересчĕ санăн ывăлна.

ЯН-ЯНРАВЛĂ МАН ТАВРАЛĂХ

Ян-янравлă ман тавралăх
Утçинче те вырмара.
Хурамаллă, лăс йăмраллă —
Ун сăнарĕ асăмрах.
Улăх урлă утма çул, утма çул,
Ухăнмасăр утма çук, утма çук.

Çаранри чечек кĕренĕ
Пирĕн нар пек питсенче.
Сывлăх туптама вĕреннĕ
Эпир анлă хирсенче.
Улăх урлă утма çул, утма çул,
Ухăнмасăр утма çук, утма çук.

Юратмашкăн, упрамашкăн
Тулăх çĕрĕн илемне
Камăн ашшĕ каламасть-ши
Пил парса хăй ывăлне?
Улăх урлă утма çул, утма çул,
Ухăнмасăр утма çук, утма çук.

ЁÇЧЕН ИР

Урам. Крансем. Тĕтреллĕ Атăл.
Хула кармашнă пĕлĕте.
Çил сисесрен хуллен утатăп,
Сар шевлесем кĕте-кĕте.

Урам. Крансем. Сар питлĕ Атăл.
Урам куçать, урам кĕрлет.
Хам утнине илтми утатăп
Ёç тумлĕ çынсемпе пĕрле.

Урам. Крансем. Çуталнă Атăл.
Крансем хăлаçланни хитре.
Çĕкленнĕ кăмăлпа утатăп,
Алран тытса ёçчен ире.

КУНҪУЛ

Тĕршĕннĕ яшши, ватти —
Хĕл сиввийĕ хăвалать.
Урара атте атти,
Кĕрĕс-кĕрĕс! сас тăвать.

Кисĕп йăтнă. Тӳп-тӳрех
Стройри пек утса пырап.
Урра! кăшкăрап вĕҫрен.
Сивĕ ҫунтарать пыра.

— Кам ҫаптарнă-ши кутран?
Ларччĕ кăмака ҫинче!..
Ҫупăрларĕ пĕр лутра
Кинемей хулпуҫҫинчен.

— Яр! Халех яр! —
Талпăнса
Туртăнатăп малалла.
— Кӳтнĕ-ҫке аллу шăнса.
Мĕн нуши хистет — кала.

— Чарса ан тăр! Пурпĕрех
Хирĕҫме сăмсу йĕпе...
Яр часрах! Мур Гитлере
Ҫапмалла ҫак кисĕппе.

...Асилсессĕн — кулăшла.
Паян кулăш та... Ун чух
Мăн ҫын евĕр ачаллах
Калаҫтарнă ҫав кунҫул.

ЛЕНИН ПРОСПЕКЧĔ

Тӳп-тӳрĕ, сарлака проспект,
Ик-айккипе лăс çăкасем.
Тĕп площаде васкаççĕ пек —
Вĕçрен хунарлă юпасем.

Тăван проспект, тăван хула —
Хаваспа ун çиçет питре.
Хĕлле те, янкăр кун, çулла,—
Кирек хăçан та вăл хитре.

Хăна кĕтме вăл тараваt,
Каякана — телей сунма.
Ачаш асам, тулли хăват
Ун пур чуна çунат хушма.

Утан ун тăрăх. Эс туян —
Вăл пирĕн пурнăç çулĕ пек.
Ун чапĕпе хула пуян.
Ялан пул çамрăк, тĕп проспект.

ПУРНĂÇ СУКМАКĔ

Вунпиллĕкре, имшер пӳ-силлĕ.
Мана каларĕç: «Ак верстак».
Çак пулчĕ пурнăçăн пехилĕ,
Мăн çул çине тухан сукмак.

Ура айне пукан лартаççĕ
Çулталăк аслăрах туссем.
Пăта ыйтсан, хăма параççĕ,
Хăма ыйтсан — вĕт пăтасем.

Шӳте шӳт выраннех эп картнă,
Пуçа усса чун хĕнемен.
Шакканă, тăрăшнă, якатнă,
Алла хистенĕ ĕçлеме.

Йышра йышпа пулма вĕреннĕ,
Хам ĕçĕм тунă ун ĕçне...
Яш вĕрене çулçин кĕренĕ
Ӳкетчĕ чӳрече çине.

— Сыв пул,— айшатăн пăшăлтатрĕç
Шӳт ăстисем, цехри туссем.
Мана института ăсатрĕç.
Асрах паян çав самантсем.

Яш чух такам та ăрăскаллă.
Пит çăмăл-и чăн çул тупма?
Сан пултăр пурнăçăн халалĕ,
Мăн çул çине тухан сукмак.

21560-47В
Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. ГОРЬКОГО

САЛТАК ШИНЕЛĔ

Тĕлĕкри пек çеç астăватăп.
Пиччемçĕм тавраçнчĕ фронтран.
Çул кĕреки.
Ят-сумлă ватă
Вырнаçнă пăхаттир тавра.

Кĕрнек хул-çурăмлă салтакăн
Кăкри тулли орденĕсем.
Çӳç пĕрчисем сий-сий кăвак ун—
Окоп асапĕн паллисем.

Хăрушă вăрçă урлă каçнă
Пиччемĕн шинельне анне
Тирпейлесе çакать мăнаçлăн
Çын курмалла пăта çине.

Кунçул иртсе ылмашнă майăн
Шинель каллех килет аса.
Салтак шинелĕ, сан хакна эп
Ăнлантăм, хам салтак пулсан.

ÇĔРШЫВ ХУРАЛĔНЧЕ

Çил аслашшĕ пĕчченех
Вăрманта хуçа.
Тулашать вăл ирччченех,
Туратсем хуçать.

Е çилли кăшт сĕврĕлсен,
Йăпанса илет,
Чи хитре чĕнтĕрпелен
Кĕртсене тĕрлет.

Улăп евĕр ват юман,
Вăл та çӳçенет.
Çĕнĕрен çил кăтăрсан,
Витĕр витерет.

Ураран ӳкересле
Çил мана лăскать,
Кӳтсе çитнĕ йĕресле,
Тарăхса вăрçать.

Парăнмастăп пурпĕрех,
Чăрсăр çил, сана.
Тулашса йĕрех-йĕрех,
Шăнт эс юмана.

Эпĕ хуралта паян,—
Канлĕх хуралçи!

Хыçӑмра — Çӗршывӑм ман,
Пӗл çавна эс, çил!

Кӑлӑхах эс алхасан,
Шинеле лӑскан,
Урӑм-сурӑм юр сапса,
Питӗмрен çапан.

Эс чухлатӑн-çке хӑвах —
Çӗнес çук мана!
Эс тытатӑн кӑлӑхах
Хуçа пек хӑвна.

Çил, эс ан тавлаш манпа,
Эп кунта — хуçа.
Хураллатӑп пӑшалпа
Тӑнӑç пурнӑçа.

Чĕлкĕм куç хупмасăр çĕр çĕрлерĕм.
Тухăçра шевле ачаш çиççе
Йăлтăрти ука тĕрри тĕрлерĕ
Йăшнă, кĕрпеленнĕ юр çинче.

Тӳпене ракетăсем кармашнă,
Çĕкленмешкĕн хатĕр самантрах.
Çĕрĕпех вĕсем мире сыхланă,
Çавăнпа тӳлек ир таврара.

ЫВĂЛА

Сăпкара кăтăкласах
Култараттăм эп сана.
Упаленнĕ чух часрах
Туян, теттĕм, тяппуна.

Сăпкари куллу асрах.
Халь чупатăн сиккипе.
Ар та пулăн, ак, часах,
Пурнăç шăвĕ еккипе.

Сан валли пуласлăхра
Мĕнлерех кăвайт çунать?..
Хăвăнтан кăшт маларах
Эп пĕлесшĕн кунçулна.

Çĕнĕ кун вăранать. Урине
Хĕвел тăснă ту урлă лере.
Шăнкăр-шăнкăр кăна юррине
Çут çăлкуç шăнкăрч пек ĕнерет.

Çĕнĕ куншăн чĕрчун савăнать,
Йывăç-курăк сулать аллипе,
Çĕнĕ кун хĕвелпе пуçланать,
Çĕнĕ пурнăç — ача куллипе.

Хал пур çинчех ал усасси —
Хавшак та нишлĕ çын йăли.
Юрри сӳнет, çĕтет сасси,
Хăйне тăллать юлхав тăлли.

Чĕрӳ вĕри чух çăлтăр çут!
Пуласлăх нишлĕхе çĕнет.
Чĕрӳ ăçта хушсан та, ут —
Суймасть вăл, мала çеç чĕнет.

Сулхăнланчĕ çил те куçкĕрет,
Шурă пĕлĕт ушкăнпа чупать.
Ăсататпăр мăнтăркка кĕре
Савăк кăмăлпа, тулли чунпа.

Кĕркунне епле ĕшталенет!
Тирпейлесшĕн ырлăх-пурлăха.
Айккинчен пăхать те киленет
Хăй сăрланă аслă улăха.

Ĕнтĕркемĕ: çĕр-аннемĕре
Юратса витет шур пуставпа.
Тулăх кăмăллă ĕçчен кĕре
Ал парать çĕр ăшă кăмăлпа.

Эп саватăп çак хитре куна:
Ун тĕлĕнмелле асамĕ пур.
Çĕклесе хастарлатать чуна
Ачапча хавасĕ — çĕнĕ юр.

Йышра чух пĕр вĕçĕм эсĕ:
«Эпĕ»,— тетĕн.
«Çиле хирĕç ут»,— тесессĕн,
Тĕршĕнетĕн.

Нимене чĕнсен, юравсăр
Кĕттеретĕн.
Кĕреке умне лартсассăн,
Хĕпĕртетĕн.

«Волга» черетне тăран та,
Эх, вĕçетĕн!
Эпĕ сăвăсем çыратăп —
Кĕвĕçетĕн.

Туссăрах юлсан, мĕн тăвăн?
Пĕлĕп, тетĕн...
Кама çулăхĕ çак сăвăс?
Тĕлĕнетĕп.

Мĕнĕм юлнă Çĕнкаса?
Яланах килес килет.
Аякра та час-часах
Эп ăна аса илеп.

Măн туратлă йăмрасем
Сахал мар-çке таврара.
Сахал мар шур кантăксем —
Çакă ял ялан асра.

Шурă лантăш пек чечен,
Хӳхĕм хĕр кунта пурнать.
Курнăçман унпа хальччен —
Чунăм Çĕнкаса туртать.

ХУРĂНСАР

I

Пирĕшти çутсассăн çуртине,
Кайăк çулĕ тăсăлсан хитрен,
Сар саппунлă хурăнсем патне
Тухкалатăп эп хутран-ситрен.

Тунсăхлаççĕ мансăр хурăнсем:
Эп вĕсемшĕн шăпчăк вырăнне.
Кашнинчех çĕн юрă вĕрентсе
Хăваратăп мар-и вĕсене.

Киленсе, çил питлĕхне çупса
Çаврака кĕрен çулçисемпе
Юрласа лараççĕ ухăнса,
Çимĕкри пуса каччисем пек.

Çуллахи кун ырлăх-ăшшине
Асилеççĕ шăппăн юрăра.
Юрă çывăхри пахчасене
Янратать ирччен: ай-ара...

II

Саралать юратнă хурăнсарăм,
Шеллемест, тăкать вăл илемне.
Курăнса пĕр симĕссĕн, пĕр саррăн
Асилтерчĕ тусăм тутăрне.

Пĕрререн-пĕр курăннă телейĕм,
Эсĕ-çке çӳрен çĕтсе таçта.
Сансăр тунсăхлать хурăн аллея,
Сансăрах тăратăп эп кунта.

Чĕлĕ евĕр çур уйăх хăпарчĕ.
Сарă тумлă савнă хурăнсар
Сарă кун çĕршывĕн тухса ларчĕ,
Ылтăн сапнă майлăн курăнса.

Мĕншĕн çук-ши ман асамлă çĕрĕ?
Пĕрре çеç ун витĕр шăхăртсан,
Сан пӳртне сăпайлăн пырса кĕрĕп
Тусанланнă шур плаща уртса.

III

Сан ятна та эп пĕлместĕп,
Маншăн эс юмах майлах.
Эс тӳрккес пăхса иртместéн:
Вăрататăн кăмăла.

Атăл хĕрринче каçкӳлĕм
Хирĕç пулнăччĕ пĕрре.
Çав самант хавасĕ пулĕ
Халь канăçсăрлать пире.

Пĕр-пĕр чух, тен, шăппăн калăн,
Эп ăнланăп шухăшна.

Эс çухалăн, эп çухалăп,
Юлăн асăмра кăна.

IV

Хырлăх хĕрринчи мăн уявра
Çамрăк-кĕрĕм савăннă чухне
Явăнса çӳрерĕм сан тавра
Каласла ачаш сăмахсене.

Калаймарăм. Халĕ хурăнсар
Ал сулмасăр ăсатать мана.
Ман санпа вылясчĕ савăнса,
Ӳкĕтлесчĕ çул çине сана.

Санпалан эп — çулăн ик айкки.
Тĕл пулма тӳр килĕ-ши санпа.
Каламан сăмахăма хайхи
Çил çине сапас-и çулçăпа?

V

Нӳрлĕ хăйăр çийĕн патакпа
Чĕркелетĕп тек, аптранăран.
Кураксем ăсанчĕç шуçăмпа,
Каясахчĕ манăн та ыран.

Каяс умĕн çакăнта тепре
Тĕл пуласчĕ ăнсăртран сана.

Çула тухнă кунăма вĕçрен
Хăварса пымастăм ырана.

Эп пĕлместĕп сан ятна, тĕлне —
Çула май тухаймăп çав кĕрсе.
Патакпа йĕпе хăйăр çине
Хăваратăп хам ята — йĕрсем.

Иртнĕ чух тĕл пул та пĕл вара;
Ирчченех çак хурăн айĕнче
Ыйха маннă яш этем ларать.
Çурăлман чечек ун чĕринче...

VI

Ылтăн çулçăсем чупаççĕ
Нӳрлĕ хăйăра чĕрсе.
Юлашки сăмах пулсаччĕ:
— Уйрăлас темен йĕрсе...

Шутламасăр пуль каларăн
Эсĕ çак сăмахсене.
Хумханмасăр-и ал парăн
Йăлтăрти çу илемне?

Эс юратнă, эп юратнă...
Вĕçсĕр шавлă хурăнсар,
Кур, çаралнă, шăпăрланнă,
Пуçне тайнă хурланса.

VII

Кураксем пуçтарăнчĕç çула,
Манăн та ыран каяс пулать.
Кĕр илемĕ ăсанать пĕрле —
Чарăнмасăр хурăнсар кĕрлет.

Аллăм акă, савнă хурăнсар!
Хуçăлса ан юлччĕ, хурланса.
Килсе тухăпин çуркуннепе
Симĕс ярапаллă утсемпе.

VIII

Йĕркипе шап-шурă хурăн,
Кашни çийĕн кураксем.
Çук, пулаймĕ ĕнтĕ урăх
Çакăнтан санпа иртсе.

Эс юлатăн, савнă çыннăм,
Манăн çулăм — аякка.
Курак килĕ-йышĕ сырнă
Хурăнсар сĕнет курка.

Ак сана, тет, çул куркийĕ,
Ан мансам мана унта...
Кăлтăр пĕлĕт сийĕн-сийĕн
Вĕçсĕрех куçать таçта.

ÇЫРУ

Ятарласа, ята хурсах
Çырас теместĕм.
Пурнăçăмра тепре курсан,
Курнăçасса ĕмĕтленеттĕм,
Пĕрре пăхса илсех куçран
Анланасса кĕтеттĕм.

Улталаса хам чĕрене,
Кĕте-кĕтех пулаймăп кĕтĕк.
Эсĕ калас сăмахсене
Иртен-çŭрен куçĕсенче те
Пĕрер турамăн кĕленеймĕп.

Çамрăк çынна пĕччен чухне
Аса илсе ларма телей-мĕн.
Анчах çухалнă кунсене
Паян калле илсе килеймĕн.

Кунçул тĕркийĕ хушшинче
Халь эс çухаласран хăратăп.
Хушшăмăрсем-çке пит инçе:
Теме шанса çыру çыратăп.

Мана вăратрăн куллупа,
Унтан, хĕвел пекех, çухалтăн.
Кĕтес вăййи выляс санпа —
Вара эп хушăттăм вăй-хал та.

Куç виçейми тавралăха
Тӳлек ирпе тухса сăнатăп.
Çил хускатать хăвалăха.
Çыр хĕррине чупса анатăп.

Палан тĕми ӳсет сăртра,
Патне пырсан, хуллен хумханчĕ.
Утма çулпа эс ăнсăртран
Çула пӳлсе утса тухсанччĕ...

Канăç паман ĕмĕтсене
Вара аса илес те марччĕ.
Ялан пĕччен чух киленме
Ман пур вĕрентнĕ кăвакарчăн.

Сапса паратăп та салат,
Кăлтăртатать вăл: савăнать-çке.
Хутлать умра калла-малла,
Капашланать кĕре çуначĕ.

Хăть виç сăмах, хăть виç сăмах
Сăваплă кайăк ма пĕлмест-ши?
Хам юратуллă салама
Сана ун урлă эп кӳресшĕн.

Ятарласах, ята хурсах
Çыратăп. Ман сăмах вĕçленчĕ.
Çĕн кун палли, кăвакарса,
Кантăк çинче, ав, тĕрĕленчĕ.

Камччĕ-ши вăл, мĕнлескерччĕ?
Виçĕмкун çĕр каçиччен
Калаçса йăлт йĕрĕнтерчĕ
Çутă туйăмсем çинчен.

Мĕнлескерччĕ — хŭхĕм, лайăх
Сăнĕнчен, çипуçĕнчен.
Куçĕсем шур тутăр айĕн
Йăлкăшатчĕç пит чеен.

Калаймастăп — мĕнлескерччĕ,
Çирĕм ятчĕ асĕнче.
Калаçса йăлт йĕрĕнтерчĕ
Хăй савма пĕлни çинчен.

КĔР ĂСАННИ

Юрă

Тахçанах шăпланчĕç шăпчăксем,
Тăрнасем васкарĕç кăнтăра.
Кĕр ăсанчĕ. Тусăм, итлесем,
Сан валли юрлатăп çак юрра.

Сан ятна пухасчĕ чечексем —
Чечексем те шанчĕç пахчара.
Кĕр ăсанчĕ. Тусăм, итлесем,
Сан валли юрлатăп çак юрра.

Çуллахи каç ыррăн, киленсе
Тек санпа выляймăп вăйăра.
Кĕр ăсанчĕ. Тусăм, итлесем,
Сан валли юрлатăп çак юрра.

Çăра тĕтре чухнехилле
Çанталăк ăмăр.
Çывăхрах
Вĕт тумлама, шывлак çиле
Курасшăн эпĕ кантăкран.

Тулта çаплах йĕпхӳ те çил.
Асфальт çинче кӳлленчĕксем.
Сар парăс пек çăка çулçи
Анаталла ишет сиксе.

Кĕтетĕн.
Хĕрĕмсем паян
Кĕтеççĕ ашшĕне.
Çĕрле
Ман поезд вокзалтан каять.
Ыран ир пулăпăр пĕрле.

Сив кантăк çийĕнчи йĕрсем —
Ыран тинкермĕп вĕсене.
Пепкемĕрсем чĕвĕлтетсе
Тултарчĕç пӳлĕм ăшшине.

ЮР ЛАРЧĔ ПАЯН

1

Ялăм ыйхăран вăраннă.
Икĕ йĕр çĕн юр çинче.
Икĕ çын тăрса калаçнă
Утăмра пĕр-пĕринчен.

Уйрăлса йĕрсем каяççĕ.
Тен, пĕрлешĕç.
Уйăпсем
Пĕр-пĕрин çумнех шăваççĕ
Чи! те чи! калаçнăçем.

2

Чĕлтĕрти ачаш юр çийĕн
Йĕлме йĕлтĕрĕм шăвать.
Нихăçан асран тухми йĕр
Хăварассăн туйăнать.

Хĕл иртсен, çĕн юр çинчи йĕр
Çухалать. Çухалтăрах.
Эпир çеç-им, Хĕл Мучи те
Кăмăллать çемçе юра.

Ачуна тытан та халĕ
Кантăкран пăхса ларан.
Шавлă уява яш халăх
Тухнă улăха паян.

Асапна пытараймасăр
Чăмăртатăн ачуна.
Хурлăху ытла тăрлавсăр
Чăмăртать ачаш чунна.

Улăхра та, уй-хирте те
Çур салатнă илемне.
Хурланса эс ирттеретĕн
Çирĕмри кунусене.

Хавалу, паллах, хавасла
Çамрăклăх ытамĕнчех,
Сĕрме купăс янкăс саслăн
Кĕрлекен уявсенчех.

Урамран куçна илмесĕр
Тăрмалатăн тек чунна.
Телейне, хакне пĕлмесĕр,
Шаннă эсĕ ют çынна.

Кулançи пулан — вăл йӳçĕ,
Юрлама тăран — манан...

Телей вăрлăхĕ, ачу çеç,
Пур сана пусаракан.

Вăл та урама тухасшăн,
Туртăнать, чĕвен тăрать...
Урампа иртет ун ашшĕ
Ун çине пăхмасăрах...

ÇУРХИ КĔТНЕ

1

Шыв тухнă пăр çине,
Кĕтне те тапранать-тĕр,
Хунавлă пĕрчине
Ĕçчен акмашкăн хатĕр.
Сыпран сыппа ларса
Сар хăмăш та хунасшăн,
Тĕнче капăрланса
Пуçларĕ хŭхĕм ташă.

2

Ĕнер Кĕтне тапранчĕ,
Паян тамалчĕ шыв.
Каллех пĕр кун çухалчĕ.
Мĕскер туманччĕ-ши?
Çыран çинче тăратăп
Чĕре выртман енне.
Пĕрерĕн юхтаратăп
Яман çырусене.
Ĕнер Кĕтне тапранчĕ,
Паян тамалчĕ шыв.
Сана ман курмаллаччĕ,
Калассăм пурччĕ-ши?
Сана ман тав тăвасчĕ:
Эс, ыйхăсăр каçсем...
Хитре, хитре юхаççĕ
Эс вулайман хутсем.

ĂВĂС

Хĕре каччă ĕшнере чуптунă
Пĕринче ват ăвăс айĕнче...
Тепĕр кун ялта шӳтленĕ, кулнă,
Пурте пĕлнĕ тĕлпулу çинчен.

Каччă чунтанах хĕрне кӳреннĕ,
Чĕринче хĕмленнĕ вут, пушар.
Вăл ăна юратнă, вăл ĕненнĕ,
Анчах хĕрĕн чунĕ пуш-пушах.

Хĕрĕ куççульпех ӳпкелешсе те
Каччине ятланă теменччен:
«Эпĕ каламарăм аннене те
Хамăр тĕл пулни, савни çинчен...»

Ватта юлнă ăвăс, çил тухсассăн,
Шавлама пуçлать — çапла йĕрки.
Мĕн тăвас вăл сӳпĕлти пулсассăн?
Юрату варланчĕ ун пирки.

Ёмётреччё эсё. Çёмёрт куçлă.
Юрăри пек хӳхём сăн-питпе.
Сан яту манра çĕн юрă пуçлё,
Çур чечекё акё йёркипе.

Эс тёл пултăн. Мён калам, тăванăм?
Ма инçе çӳренё эс манран?
Эсё çёмёрт куçлăн туйăнаттăн,
Пăхрăм та, куçу сан — хурлăхан.

Çул хĕррипе — сайра юманлăх, улăх.
Каçхи тĕнче шупка пасра.
Самантлăх тĕлпулу, самантлăх кулă —
Кашни тĕпренчĕкĕ асра.

Телей саманчĕ пит кĕске пулнинĕн
Сăлтавĕ ăçтине пĕлсен,
Мăн çулăн хĕрринче тăмастăм тин эп,
Машинсене пуçа сĕлтсе.

Пас йĕпписем вĕçеççĕ, темĕн çырнăн,
Тĕнче хĕл сиввинче тĕнет.
Тавах сана! Манми çухалнă çыннăн
Сăнне аса илтертĕн эс.

Каçпала çумăр тапранчĕ,
Урăм-сурăм çил улать.
Урамра тăрать яш каччă.
Çывăрать, канать хула.

Вĕçренех сăнать яш каччă
Чăрсăр вăхăт шунине.
Тусĕ кĕçĕр тухмаллаччĕ
Хăйсем савнă сак çине.

Курнăçма васкан чĕрешĕн
Пĕр минут кĕтме асап.
Çумăрĕ ишет чĕресĕн,
Çил улать те çил асать.

Шанчăкпах кĕтен пулсассăн,
Шанчăкпах кĕтсе илен.
Килĕ те вăл шăппăн, сассăр,
Куçна хупăрлĕ çемçен.

Йăпану çеç пулчĕ мар-и
Çакăн пек шухăшлани?
Пурпĕрех-пĕрех тухмарĕ
Каçранпах кĕтен савни.

Ухăнать йĕпеннĕ хурăн,
Систересшĕн вăл ăна.
Вăл пĕлмест-çке, тусĕ унăн
Юлнă тепĕр сменăна.

Кĕсле тытăп — кĕсле евĕр
Юрласа кăтартăп, теттĕм.
Иртнине аса илмесĕр
Сан патна çеç тĕмсĕлеттĕм.

Шăпама пуçа тайса та
Тилмĕреттĕм, кĕленеттĕм.
Курнăçма май тупса патăр,
Килĕшме те, пĕрлешме те.

Эс савса пăхса иртетĕн...
Эп ăнлантăм пĕр сăмахсăр.
Кăлăхах кĕтен пуль, тетĕн,
Ху сывлатăн ассăн-ассăн...

Каллех хирте
Кĕтеп ире:
Çĕн кун —
Çĕн савăнăç,
Çĕн тум.
Васка-васка
Шăрçа тирет
Пучах çине
Ăршаллă хум.

Утас килет,
Юрлас килет.
Пĕр юррăм тунсăха сирет.
Манас тенийĕ манăнмасть,
Курас тенийĕ тĕл пулмасть.

Ĕлккен сурпан —
Тӳпе ани.
Каллех хирте,
Каллех хирте.
Курнăçманни,
Курнăçманни,
Шутла-ха,
Пĕр ĕмĕр çитет.
Усрать те шанчăка чĕре,
Анчах та эсĕ инçетре.
Манас тенийĕ манăнмасть,
Курас тенийĕ тĕл пулмасть.

Чарăнмасăр шăхăрса садра
Каçăхсах юрлатчĕ каçăр шăпчăк.
Çывăрмастăм эпĕ сăпкара,
Урăх сасă çукчĕ, питĕ шăпчĕ.
Итлесен те питĕ тимлесе
Шăпчăк юррине вĕренеймерĕм.
Мул туса аннем те пиллесе
Шăпчăк юррине пама пĕлмерĕ.

Таврана сĕм-каç хупласанах,
Шăпчăк евĕр эс садран кĕместĕн.
Юрласа юрайăп-ши сана —
Шăпчăк евĕр юрлама пĕлместĕп.

Сиктĕрме çине чĕкеç ларса
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхипе калаçрĕ.
Нихăçан манми йĕр хăварса
Ун сассийĕ чĕренех вырнаçрĕ.
Эх, чĕкеç, чĕкеçĕм! Эс халь çук.
Кĕмĕл сассуна мĕн-ма сĕнмерĕн?
Савнă çын, аннем те çавăн чух
Санăн чĕлхӳне пама пĕлмерĕ.

Тинкерсе куçран эс пăхсанах,
Сăмахсем çĕтеççĕ-çке, пикеçĕм.
Калаçса кӳнтерĕп-ши сана —
Чĕкеç евĕр çепĕç мар чĕлхеçĕм.

Чечекреччĕ çĕмĕртлĕх,
Чечекреччĕ ват палан.
Мĕн-ши, мĕн-ши ĕмĕрлĕх
Чеченрех çамрăклăхран?

Чечек çурчĕ çĕмĕртлĕх,
Чечекре халь ват палан...
Ним те çук çав ĕмĕрлĕх
Чеченни çамрăклăхран.

ПОЕЗД КАЙНĂ ЧУХНЕ

Пин-пин алă сулать,
Пин-пин алă сулать.
Аллăмра, аллăмра
Шур ромашка çыххи.
Чи хакли эс, савни,
Эсĕ чи çывăххи.
Чечексен тинĕсне,
Ун хумне, ун тĕсне
Эп паян та усрап,
Эп усрап асăмра.
Поезд шунă чухне
Тăтăм кантăк умне.
Сан сăнна, аллуна,
Сан ачаш куллуна
Эпĕ тупрăм, ĕнен,
Пин-пин алă çинчен.
Эпĕ тупрăм сана
Чечек тинĕсĕнче.

Ман асатте сăмах вакланă...
Юмах-халап пуçлансанах,
Ватта-вĕтте, ай-ай, култарнă...
Йăхран вăл юлнă халь мана.

Итле, сана ĕнентеретĕп,
Савниçĕм, эсĕ итлесем,
Хам савнă çынпала шӳтлетĕп,
Анчах савмастăп шӳтлесе.

СЫВЛĂМЛĂ СУКМАК

(поэма сыпăкĕсем)

Уйрăлу

Те эпĕ йăнăш тунă
Хам ансăр çул çинче.
Иртсе çухалнă куншăн
Çуттийĕ çук тĕнчен.

Ачалăх тусĕ, тантăш,
Каçар мана, каçар...
Асил епле пулсан та
Çав уйăхлă каça.

Тӳлекчĕ. Шăпчĕ. Ырă
Пус умĕнче тăма.
Каларăн эсĕ: «Пырăп
Чăматанна йăтма».

Пусран шыв кăларатпăр,
Ĕçетпĕр витререн.
— Атя, çĕн ят хуратпăр...–
Чаш! сапрăн эс питрен.

Кӳрентĕм. Кӳренмесĕр,
Çав шухăш-и паян?
Çĕр типессе кĕтмесĕр
Ыран тухса каяп.

Сатин кĕпе йĕпенчĕ,
Эс сасăпах кулан.
Тен, эп йĕпе чăх пекчĕ,
Тен, курăннă упан.

Каяс çынна сапмаççĕ
Пусри сив шывпала.
— Вĕри чуна шăнтмаççĕ,—
Шӳтлерĕм санпала.

— Кайсан та килĕн,—терĕн,—
Юратнă ху ялна...
Каяс чухне сĕнмерĕн
Черченкĕ аллуна...

Кайни паха, темен-и
Эс ун чухне ăшра?
Çут уйăх шунăçемĕн
Чӳхенчĕ пусăра.

Хăвна, тен, эсĕ суйнă,
Пулман эп саншăн ют.
Тен, эпĕ йăнăш тунă
Çулра пĕрремĕш хут...

Анне

Чăх-чĕпсем вĕççе анаççĕ
Каштасем çинчен çĕре.

Çăл шывĕпе çеç уçасчĕ
Ыйхăланă ӳт-тире.

— Çывăрмастăн-çке эс, ывлăм,
Ыйхă вĕçрĕ-и вара?
Кан кăштах, типмен-ха сывлăм,
Сывлăш уçă чăланра.

— Ыйхă вĕçрĕ çав, аннеçĕм,
Каяс çулăм çывăх мар.
— Ăнланатăп... Тем, чĕтреççĕ
Аллусем сан. Çывăрман?

— Çывăрман çав. Вĕçсĕр ларчĕ
Пӳрт çинче пĕр тăмана.
Эп сыхларăм.
— Эппин, тарчĕ?
— Тарчĕ чăтлăх вăрмана...

— Чăхсене шуйлантарасшăн...
— Çитĕ ĕнтĕ. Ăш сĕтпе
Ăш пусараканччĕ ашшĕ,
Кил, ĕçсем ак хĕррипе.

— Çук, тавах. Пуçа уçмалăх
Сив шывпа çеç сивĕнем.
— Тем те пур çавсен çунмалăх,—
Шăппăн каласать аннем.

Сарана сукмакĕ

Сукмакпа çуран утатăп,
Курăк, курăк умăмра.
Сарана çеçки татăтăп
Чарăнса тăра-тăра.

Хыçа юлчĕ Çирĕк варĕ,
Халь кураймăп çуртăма...
Çул кичем çав: эс тухмарăн
Чăматан йăтса пыма.

Тунката çине ларатăп
Вăрмана кĕрсе çитсен.
Шăппăн юрласа яратăп
Çырă çӳç пике çинчен.

Хыçалтан такам сасартăк
Куçăма пырса хуплать.
— Ах, Володя! Эсĕ мар-тăк,
Ятласах пăрахмалла.

— Сывă-и, чăваш каччийĕ? —
Аллине тăсать мана.
— Чим, вара эс кам ачийĕ?
Тин çеç кайрăн хулана.

— Тин çеç мар çав, халĕ ĕнтĕ
Хулари тумпа паян.

Манни евĕр тум пĕрин те
Ялта пулмĕ урăхран.

Ним калаймăн, килĕшӳллĕ
Шĕлепке те сар пушмак...
Кирлĕ марччĕ пуль иркӳлĕм
Вăрăм çулăма тухма.

Таврăнан çынна хаваслăх,
Хурлăх-çке каякана.
Чăтлăхра чĕв-чĕвĕл саслă
Кăсăя юрлать кăна.

Сарăлса çĕр çийĕн анлăн
Хупах ӳкнĕ çĕр çине.
Талпиçен мăнаçлă, танлă,
Ун çинче сăр хурт сĕрлет.

Мĕн валли туртса кăларчĕ
Тусăм хĕрĕн çырăвне?
Çитменне-и, вулаттарчĕ,
Çитменне-и, хĕр ятне...

Эп чĕнмерĕм. Мĕн калам-ши?
Тăмана сыхланине?
Е унпа салам ярам-ши
Хам çухалнă савнине?

Тăван кил

Çулсем иртсен, тăван яла
Килсе кĕме пит ырă.
Унтан, чупас пек, çулпала,
Мĕн чул паллана выраĕн?

Аса илсе пыратăн эс
Ачалăхна ачашшăн.
Ытамунта тăван кĕтес —
Йăлтах эс ытамласшăн.

Хаваслăхпа пĕрлех чунра
Çуралчĕ ăшă тунсăх.
Тăван кĕтесĕм умăмра,
Эп пурăнаймăп унсăр.

Пӳрте кĕретĕп те чупса —
Юмартлăх, тараватлăх...
Анне шуралнă туртăнса,
Ăна йӳтетнĕ ватлăх.

Çапах та килнĕ ывăлне
Хисеп те чыс тăвасшăн.
Хăй кĕтнине, тусăннине
Мана кăшт шахвăртасшăн.

Чухлатăп ĕнтĕ унсăрах...
— Кала, кала... Итлетĕп.

Апла-ха, иртнĕ уйăхрах
Пĕр хĕр килсеччĕ, тетĕн?

Сăнпа мĕнле-ши? Пĕвĕпе?
Вăтам? Наçтаççи мар-и?..
Тĕкленнĕ кайăк чĕппи пек
Пире шăпа пайларĕ.

Халь кам çинчен шутланине
Йăлтах тĕпчет-çке ватă.
Сӳнме пуçланă вут çине
Каллех хурать кăвайтă.

Çĕр каçипех, ирччен, пĕччен
Ман ыйăха сыхларĕ.
Те ман çинчен, такам çинчен
Хаш! сывласа шутларĕ.

Пӳрт ăшчикне кăвак тĕспе
Ирхи тĕнче сăларĕ.
Картишĕнче хăй сассипе
Витре хуллен юрларĕ.

Эс вуламан çыру

Сан тусусем мана пĕлтерчĕç,
Эс çурнă ман çырусене.
Тен, юрату асапĕ, терчĕ
Салантăр, терĕн, çил çине.

Эп пурпĕрех каç-каç çыратăп
Сан ятупа ăш сăмахсем.
Тирпейлесе шкапа хуратăп,
Халь йышлăн пухăнчĕç вĕсем.

Йăмра çулçи ӳпне ӳксессĕн,
Хĕл ăшă пулмалла иккен.
Юр пĕрчисем, черет кĕтмесĕр,
Вĕçсе анаççĕ пĕлĕтрен.

Халь вăрмана тухса утасчĕ
Санпа çӳренĕ вырăна.
Шур çиттипе витсе хураççĕ
Сив мучисем ват хурăна.

Ăста кĕпе аркийĕ пӳкнĕн
Мулкач йĕрленине курса:
— Ăçтан килсе ăçта-ши ӳкнĕ?—
Хуллен çӳрес пăхкаласа.

Пăшал илес, илес те йĕлтĕр —
Çӳрес кун-кунăн мулкача.
Ăсрах-ха, раштав кунĕ пĕлтĕр
Пĕрне хусаччĕ кун каça.

Пуш алăпа, питре ман кулă,
Илтетни? Эпĕ кулăпа...
Ку çырăва та эп хам вулăп,
Тирпейлесе хурам шкапа.

Ташă каçĕ

Хастар чăваш ташши. Тăсаççĕ
Ик вăйăç харăс купăсне.
Аллисемпе-çке авăсаççĕ
Хĕрсем каччийĕсем енне.

Çаран çинчи пек харăс-харăс
Хĕрсем юхаççĕ ухăнса.
Шыва анан хурсем пек кайрĕç,
Пĕрле алла-ал тытăнса.

Такмак, такмак... Вĕçрен кулаççĕ,
Айвансенчен тăрăхласа.
Иккен, яшсем пике суйлаççĕ,
Ĕне пасарĕнче чупса.

Сиксе тухать пĕр хӳхĕм каччă,
Урай хăмийĕ кисренет.
Пĕр пикене вăл ташă пачĕ,
Пике мана пырса чĕнет.

Пуçа сулса кăна сивлетĕп:
«Пулмасть пуль, маннă ташлама...»
Хĕр кӳренет — туяп-сисетĕп,
Вăл именет умра тăма.

«Çамрăклăха аса илер-и?» —
Хуллен çĕклентĕм вырăнтан.

«Ватăсене те чыс»,— шӳтлерĕ,
Ура тапса пур кăмăлтан.

Ăна курсан, Наçук сăнарĕ
Килсе йĕрленчĕ умăмра.
Чим, ку ун йăмăкех-мĕн мар-и?
Епле вăл çитĕннĕ ара!

Çапла. Пĕрре те шутламанччĕ.
Аппăшĕнчен те хӳхĕмрех.
Куллен çырусене вулатчĕ,
Пĕччен юлсассăн пӳлĕмре.

Юратнă, иртнĕ те çухалнă,
Тен, пулнă çапларах шăпа.
Йăмăксене валли хăварнă
Çав телее, çав асапа.

Ташша чĕннишĕн тав тăватăп,
Ларатăп юнашар унпа.
Ун сывлăхне ыйтма пуçлатăп,
Пăшăлтатса, çурма саспа.

— Йысна пулас пекехчĕ эсĕ,
Ма мантăн пирĕн тавраша?
— Мĕнле калас, пурне пĕлсессĕн,
Шур çӳç час шăтĕ, апăрша.
— Пĕлетĕп ĕнтĕ, тиркешетĕр
Эсир вĕреннĕрех çынсем...

Аппа кĕçех килсе çитет-тĕр,
Ачи çырлан ӳсет, çиçсе...

...Çулсем ик еннелле васканă,
Эп утнă пуçăма усса.
Вăл такампа алла-ал кайнă,
Сӳнес хунарăн çуталса.

Çул чиккинчи маяк йăвашшăн
Çухалнă, хыçала юлса...
Юратнă йăмăкăм, тархасшăн,
Иртни çинчен часрах мансам...

Шĕшкĕлĕхре

Шĕшкĕлĕхе тухса утатăп
Кушил çакса пĕр ирхине.
Сар мăйăр, туттине, суйлатăп,
Шĕкĕлчесе курланкине.

Шаклаттарса кăна кататăп
Шур пăтăллă сар хурана.
Çăка ращи те, ват ката та
Халь çамрăкланнăн курăнать.

Вĕçсе турат çинчен туратăн
Пакша, çăм-çăмламас хӳре,
Урисене сарать хăлатăн,
Чăмать çăка çинчен çĕре.

Ыйхăласа ларать пĕр кӳлĕм
Улатакка юман çинче.
Сар кăсăя пĕр илĕртӳллĕн
Чĕвĕлтетет çинçе-çинçе.

Ларса канам-и, сывлăш уçă.
Вĕренĕп кайăк юррине.
Çапла шухăшласа пыруçăн
Илтетĕп çын ӳсĕрнине.

Ак тĕлпулу! Володя тусăм
Тачка роман вулать выртса.
Юрать, юрать, сиен-им, усă.
Анчах ăçтан килчĕ тухса?

Кĕтменччĕ, шутламан та ĕнтĕ.
Авланнă, терĕç, хулара.
Ман савнине илчех пулин те,
Хĕпĕртесех алла парам.

Сăмах-юмах нумай пулмарĕ,
Тӳрех ал патăм туй ятне.
Володя нимĕн шарламарĕ,
Пуç тайрĕ, шăлчĕ тутине.

Ыйтас-и, ма пĕччен, ма тăлăх?
Тăхтас-и хăй пуçариччен?
Темле майпа ĕнер çеç шăллăм
Каласшăн пулчĕ ун çинчен.

— Ман пурнăç юнтарма пуçларĕ...
Çĕр варринче ача йăтса,
Юратнă арăм килтен кайрĕ,
Эп юлтăм, куççуле тăкса.

Калас килет, тĕсси, тăванăм.
Çын телейне тек хапсăнан.
Пăхма пĕлмен чечек час шанĕ,
Шансан, пăрахăн çырмана.

Халь романсем йăтса утатăн
Таса, сăваплă вăрманта.
Шăпа телейсĕр — ылханатăн,
Телей те пулнă çумăнта.

Çитет, пăрах. Патак илер те
Шырар шăши йăвисене.
Эс, пӳтсĕр çын, мĕн-ма пĕтертĕн
Çамрăклăха — унне, манне?

Тĕкĕлтура пӳртне тупар-и?
Пӳрне кăшлаччăр нăрласа.
Пилеш хуллийĕпе ярар-и
Калтасенне хӳре татса?

Çук? Килĕшмест-и? Ха, апла-тăк
Кĕнекӳне вулах, вулах.
Юрать, эп вăрманта хутлатăп
Ыйха пĕлмен хуралçăлла.

Тăвайкки

Тăвайкки тулли шавлаççĕ
Ачасем кун каçиччен.
Савăнаççĕ, ярăнаççĕ
Киленсе чун каниччен.

Эп сăртра пăхса тăратăп.
Халь пуласчĕ вĕсемпе!
Эпĕ ярăннă çыран та
Темшĕн ăшăхланнă пек.

Шурă кĕрĕклĕ хавасла
Хĕрача çуни-мĕнпех
Тӳнсе кайрĕ. Уçă сасла
Кулса ячĕ чепчен пек.

Йĕретех тесе шутларăм.
Пулăшма айванскере
Çырмана часрах васкарăм,
Юр питне чĕре-чĕре.

— Мĕн тăван, упа çурийĕ?
Çавăн пек-и катаччи?
Кам пулатăн? Кам ачи эс?
— Кам ачи? Анне ачи.

— Пĕчĕкскер, ятне пĕлесчĕ...
— Настя. Эп анне ятлах.

Хăвăра епле чĕнеççĕ?
— Эпĕ ятсăрах çапла.

— Эс, пичче, чее,— кӳренчĕ
Шур упа çурийĕ ман.
Суйнине сисет теменччĕ
Çакă шĕвĕр нихăçан.

— Настя, Настя! Шăннă мар-и
Санăн пĕчĕк аллусем?
Пĕчĕк хĕр ним шарламарĕ,
Утрĕ çунине тĕртсе.

— Настя, Настя! Йывăр мар-и
Çунашку сан сăрталла?
Пĕчĕк хĕр ним шарламарĕ,
Хăвăрт утрĕ малалла.

Кӳрентертĕм. Мĕн тăвам-ши?
Шел сăваплă çын чунне.
Ятăма вара калам-ши?
Тĕрĕсне, йăлтах чăнне?

Настьăна тытса чаратăп,
Хăпарса çитсен сăрта.
Юмахсем вĕçрен яратăп,
Куçкĕрет вăлта-вăлта.

Кĕнеке пама пулатăп
Ыранпа, киле пырсан.

Пĕчĕкскер мана ан мантăр,
Карттинсем, сăнсем курса...

Чавка пуçĕ пек çемçе юр
Чăпарлатрĕ пĕлĕте.
Йăтăнса анмасть-и, тейĕр,
Пуç çине шап-шур кĕлте.

Виçĕ юрă

Уй-хир шурă. Пĕлĕт шурă.
Хăвалаç ăна çилсем.
Виççĕн виç телей, виç юрă,
Виççе уйрăлчĕç çулсем.

Этеме кирлех çул тусĕ.
Кирлĕ кулă, чун ăшши.
Туртăм, туйăм, утăм, пусăм —
Пурте маншăн пулнă-ши?

Манăça иртнийĕ кайĕ:
Телей пысăк-çке тĕнчен.
Пурнăçра çулсем нумай та —
Пĕрлешеççĕ иккĕш çеç.

Кунсерен вăййа тухатăп.
Чун уççийĕ — тăвайкки.
Тилмĕретĕп тем çухатнăн...
Эпир — çулăн ик айкки...

Пĕчĕк чĕпчене куратăп.
Халь вăл шанчăкпа пăхать...
Эпир ярăннă çыран та
Темшĕн ăшăхланнă халь.

Эп çӳренĕ сукмаксем те
Манăн асăмра кăна.
Шавлă шĕвĕрсен, çаксен те,
Кашниннех пĕр çул кăна.

Уй-хир шурă, пĕлĕт шурă.
Юр пĕрчийĕ хĕвĕшет.
Виççĕн виç телей, виç юрă.
Икĕ çул çеç пĕрлешет.

ТУПМАЛЛИ

Тăван халăх сăнĕ 3
Асап мĕлки 6
«Йăрăмланса сурпан тĕррийĕ пек...» 7
«Пуçламăш хут алла илсессĕн...» . 8
Çамрăклăх 9
Çул тусне 10
Аннене 11
Ян-янравлă ман тавралăх . . 13
Ĕçчен ир 14
Кунçул 15
Ленин проспекчĕ 16
Пурнăç сукмакĕ 17
Салтак шинелĕ 18
Çĕршыв хуралĕнче 19
«Чĕлкĕм куç хупмасăр çĕр çĕрлерĕм...» 21
Ывăла 22
«Çĕнĕ кун вăранать...» 23
«Хал пур çинчех ал усасси...» . 24
«Сулхăнланчĕ çил те куçкĕрет...» . 25
«Йышра чух пĕр вĕçĕм эсĕ...» . . 26
«Мĕнĕм юлнă Çĕнкаса...» . . 27
Хурăнсар 28
Çыру 33
«Камччĕ-ши вăл, мĕнлескерччĕ?..» 35
Кĕр ăсанни 36
«Çăра тĕтре чухнехилле...» . . 37

Юр ларчĕ паян 38
«Ачуна тытан та халĕ...» . . . 39
Çурхи Кĕтне 41
Ăвăс 42
«Ёмĕтреччĕ эсĕ...» 43
«Çул хĕррипе — сайра юманлăх, улăх»... 44
«Каçпала çумăр тапранчĕ...» . . 45
«Кĕсле тытăп — кĕсле евĕр...» . 46
«Каллех хирте...» 47
«Чăранмасăр шăхăрса садра...» . 48
«Чечекреччĕ çĕмĕртлĕх...» . . 49
Поезд кайнă чухне 50
«Ман асатте сăмах вакланă...» . 51
Сывлăмлă сукмак (поэма сыпăкĕсем) 52

Для старшего школьного возраста

Денис Викторович Гордеев

БЕРЕЗОВАЯ АЛЛЕЯ

Стихи

На чувашском языке

Редактор **М. П. Егоров**
Художник **В. М. Ширшов**
Художественный редактор
А. А. Макаров
Технический редактор
А. Ф. Никитина
Корректор **Л. С. Богатеева**

НТ 17001.
Сдано в набор 27/IX-1977 г.
Подписано к печати 6/I-1978 г.
Формат 60×90/32.
Бумага типографская № 1.
Физ. п. л. 2,25.
Учетно-изд. л. 1,81.
Заказ № 4792. Тираж 1000 экз.
Цена 10 коп.

Чувашское книжное издательство, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР, Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

ГОРДЕЕВ Д. В.

Г 68 Хурăнсар. Сăвăсем. Чăваш кĕнеке издательстви. Шупашкар. 1978 ç.

72 с.

Денис Гордеев сăввисем совет çыннине, ун паттăрлăхĕпе ĕçченлĕхне мухтаççĕ, пурнăçра чăтăмлă пулма, Тăван çĕршыва юратма вĕрентеççĕ. Кĕнекене салтак сăввисемпе юрату сăввисем те кĕнĕ.

С(Чув)